Аслă ăру – çамрăксемшĕн тĕслĕх

Проект Чăваш Республикин Цифра аталанăвĕн, информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин пулăшăвĕпе пичетленет. Авторĕ – Елена Порфирьева

Пĕрлехи ĕç хавхалану кӳрет

«Кĕмĕл» вăхăт – кашни сыннăн кунçулĕнче уйрăм тапхăр. Пурнăç таппи улшăнать. Унччен вăхăтăн ытларах пайĕ ĕçре тăрăшса иртнĕ-тĕк, тивĕçлĕ канура кун йĕркине çĕнĕлле йĕркелеме хăнăхма тивет. Сывлăх çинчен те ытларах шутламалла – аслă ӳсĕмрисем çак черчен çулсенче сывă пурнăç йĕркине пысăк тимлĕх уйăрни питĕ аван.

Ача-пăча та çитĕнсе ура çине тăнă ĕнтĕ, аслашшĕ-асламăшĕсемпе кукашшĕ-кукамăшĕсем юратнă мăнукĕсене ӳстерме те хаваспах пулăшаççĕ. Çамрăк ăрупа сывăх пулни, хăйсен тĕпренчĕкĕсен ӳсĕмĕ-çитĕнĕвĕсемпе савăнма май пурри вĕсемшĕн – вăй-хăват парса тăракан çăлкуç. Çапла, тивĕçлĕ канура та пурнăç пĕр вырăнта тăмасть. Чун хавалне çухатмасан, харпăр хăйне çирĕп, кăмăл-туйăма çĕкленӳллĕ тытас тесен кирек хăш ӳсĕмре те пурнăç тулли.

Акă, поселокри «кĕмĕл» çулсенчи маттурсен активлăхĕнчен тĕлĕнмесĕр май çук. Вĕсем пуриншĕн те тĕслĕх пулса тăраççĕ. Вĕсем – волонтерсем те, юрă-ташă ăстисем те, тĕрлĕ конкурссен участникĕсем те, обществăлла ĕçре те малтисем... Çак виçесĕр хастарлăха тытса пыма «кĕмĕл» ӳсĕмрисене Вăрнарти историпе краеведени музейĕ тата унăн ертӳçи Елена Шарипова нумай пулăшнине палăртмалла. Вăл тăрăшнипех ĕнтĕ музей çумĕнче ăсталăх мастерскойĕ ăнăçлă ĕçлет. Аслă ӳсĕмрисем унта тĕрлĕ алĕç вăрттăнлăхĕсене вĕренеççĕ, пултарулăха аталантараççĕ, çавна май пĕрпĕринпе тĕл пулса вăхăта ăшшăн калаçса, чуна уçса усăллă ирттереççĕ. Тĕрĕссипе, Елена Шарипова йĕркеленĕ пĕрлĕх вĕсемшĕн тахçанах юратнă çемье пекех пулса тăнă. Вăл – туслăх, кăсăклăх, хавхалану вырăнĕ.

Хальхи вăхăтра, акă, кружок хастарĕсем республика Пуçлăхĕн «Яркое лето Чувашии» проекчĕн пурнăçлавне те активлă хутшăнаççĕ. Нумаях пулмасть вĕсем музей ертӳçи вĕрентсе пынипех курăк-ӳсентăрантан илемлĕ пуканесем ăсталассипе мастер-класра кăмăлпах тăрăшнă. Çакă тăван халăхăн авалтан пыракан йăли-йĕркисене аса илме те, тĕрлĕ ӳсентăран сиплĕхĕ пирки пĕлме те пулăшнине палăртаççĕ мастер-класс участникĕсем.

Тĕрĕссипе вара, музей çумĕнчи мастерской ĕçне пуçарса янăранпа мĕн тĕрлĕ хӳхĕм япала хатĕрлеме вĕренмен пулĕ кунта ăстаçасем. Кил-çурта упракан «хĕртсурт», Мăнкун тĕлне уяв «автанĕ», çемьене сывлăхпа телей кӳрекен пуканесем, ача-пăча теттисем, халăх тумтирĕн пайĕсем... Вĕсем пурте хăйнеевĕрлĕ, тарăн шухăшлă, пирĕн авалхи йăх-несĕлсен пурнăçĕпе, культурипе паллаштараççĕ. Акă, пултаруллă маçтăрсем округри «Акатуй» уявĕнче те хăнасене хăйсен пэчворк техникипе капăрлăхсем тăвас, хулăран авса çыхас тата ытти енĕпе алĕç пуянлăхĕпе тĕлĕнтернĕччĕ.

Каласа хăвармалла, «кĕмĕл» ӳсĕмри хастарсем музейра уçăлакан куравсенчен те пĕринчен те юлмаççĕ, Елена Шарипова ертӳçĕпе пĕрле хамăр тăрăхри историллĕ вырăнсенче экскурсисенче пулаççĕ, хĕлле те, çулла та çутçанталăк ытамне çулçӳревсене тухаççĕ... Чăннипех те маттурсем!

Ирина ЯКОВЛЕВА

Икĕ ăру тĕлпулăвĕ чĕререх

Ял хуçалăх техникумĕнчен 60 çул каялла вĕренсе тухнă ветерансемшĕн тата унта паянхи кун вĕренекен студентсемшĕн паллă кун пулнăччĕ.

Республикăри АПК ветеранĕсен Союзĕ пуçарнипе 1961–1968 çулсенче студент пулнă, паян 80 çула çывхаракан сумлă ветерансем тĕлпулăва килсе çитрĕç. Вĕсем паянхи студентсене техникумăн историйĕпе, унăн иртнĕ ĕмĕрти пурнăçĕпе, ун чухнехи вĕренӳ условийĕсемпе паллаштарчĕç. Студентсем те хăйсем вĕренекен вĕренӳ заведенийĕ 1920 çулта Шупашкарта ял хуçалăх шкулĕ ятпа уçăлни, техникум ята 1922 çулта Вăрнара куçсан тин илни, самана тапхăрĕпе килĕшӳллĕн унăн статусне 105 çул хушшинче тăватă хутчен улăштарни çинчен интереслесе итлерĕç. Техникум Шупашкарта чухне те, Вăрнара куçсан та хĕрарăмсем мăнастирĕ пулнă çуртсенче вырнаçнă. Мăнастирĕ вара 1927 çулччен вĕренекен студентсемпе кӳршĕлле пулнă. Кунсăр пуçне техникума уйăрса панă çуртсенче малтанласа совхоз, ачасен колонийĕ, Етĕрне районĕнчен куçарса килнĕ учительсем хатĕрлекен шкул та вырнаçнă. Каярахпа совхозпа колони саланнă. Учительсен курсне Канаша куçарнă. Вăл унта паянхи кун та педучилище ятпа ĕçлет. Çакăн хыççăн тин уйăрса панă çуртсемпе 257 гектар çĕр çинче техникум хăй тĕллĕн аталанма пуçланă. Унăн пуян историйĕ итлекенсемшĕн кăсăклă пулчĕ.

Темиçе пин вăтам пĕлӳллĕ ял хуçалăх специалисчĕ вĕренсе тухнă техникумран. Вĕсем хушшинче 2 Совет Союзĕн Геройĕ, 20 тава тивĕçлĕ ĕçчен, 2 академик, наукăсен 10 докторĕпе 15 кандидат, 24-ăн Авруйĕнчи Ливановсемпе Лабиновсен ратĕнчен. 1965 çулта зооветтехник дипломне алла илнĕ, кăçалхи ака уйăхĕн 21-мĕшĕнче 80 çул тултарнă, Вăрнар поселокĕнче пурăнакан Николай Кириллович Алексеев 13 çул преподаватель, 16 çул вĕрентӳ енĕпе ĕçлекен директор çумĕ пулнă хыççăн 2003–2006 çулсенче техникум директорĕнче вăй хунă. 1967 çулта вĕренсе тухнă, пĕтĕм республикипех паллă Николай Кириллович Кириллов 21 çул Чăваш ял хуçалăх академийĕн ректорĕ пулнă.

105 çул хушшинче техникума 15 директор ертсе пынă. Пурте арçынсем пулнă, чи паллисем Р.И.Осипов (1940–1964) тата В.М.Ведин (1964–1978). Хĕрарăмсенчен вара 2016 çултанпа ĕçлекен Ольга Львова директор пĕрремĕш пулать. Вăл техникум юлашки çулсенче пысăк утăмсем туни, ял хуçалăхĕнче питĕ кирлĕ çĕнĕ специальноçсем уçни пирки асăнчĕ.

17 ветеран килнĕччĕ тĕлпулăва республикăн тĕрлĕ кĕтесĕсенчен, вĕсенчен тăваттăшĕ республикăн АПК ветеранĕсен Союзĕн членĕсем. Çавăн пекех ял хуçалăхĕн Тавне тата орденсемпе медальсене, Хисеп кĕнекине тивĕçнĕ пысăк опытлă ял хуçалăх специалисчĕсем, техникумра фармакологи предметне вĕрентнĕ Л.В.Ливанова... Ветерансем кашниех паянхи студентсемпе калаçса вĕсен ĕçĕ-хĕлĕпе паллашрĕç, çамрăксен вĕренӳ шайĕ пысăк пулнишĕн, çĕнĕ ăру пултарулăхĕшĕн кăмăллă пулчĕç.

Паянхи студентсен çитĕнĕвĕсем çинчен Вăрнар округĕн выльăх-чĕрлĕх чирĕсемпе кĕрешекен ветеринари станцийĕн пуçлăхĕ Владимир Матвеев та, хăй техникумăн патшалăх экзамен комиссийĕн председателĕ пулнă май, тĕплĕн каласа пачĕ. Студентсем ĕнесене кесарево мелĕпе касса пăрулаттарассине, кастраци меслечĕсене, выльăхсен юнне тĕрĕслеме илессине, вакцинаци мелĕсене 2-мĕш курсра чухнех пултарни çинчен пĕлтерчĕ.

Тăван çĕршывăн Аслă вăрçин тапхăрĕ техникум шăпине те пырса тивнĕ. 1941 çулхи авăн уйăхĕн 5-мĕшĕнче учрежденин çурчĕсенче стрелоксен 324-мĕш дивизийĕн 887-мĕш артиллери полкĕ тата 3065-мĕш номерлĕ эвакогоспиталĕн 3-мĕш уйрăмĕ вырнаçнă. 1216 салтак сывалса тухса тепĕр хут фронта тухса кайнă куntан. Çавна май техникумăн ветеринарсем хатĕрлекен уйрăмĕ юнашарти Кив Мĕлĕше кӳçнă, зоотехниксене Çĕн Мĕлĕшре вĕрентме пуçланă. Историлле событисем техникумра 1943–1947 çулсенче вĕреннĕ, пысăк опытлă ветеринари врачĕ, пулас специалистсене 1964–1976 çулсенче хирурги предметне вĕрентнĕ, икĕ çул Монголире, 1978–1988 çулсенче Шупашкар хулин тĕп ветеринари врачĕ пулса ĕçленĕ, паян пирĕн хушăра çук П.С.Ливанов асаилĕвĕсенчен те паллă. «Каçсерен фронта кайма хатĕрленекен салтаксем стройпа юрласа утни Мĕлĕшре янках илтĕнетчĕ», – тетчĕ Петр Семенович.

Тĕлпулу икĕ ăрушăн та аван. Çакă йăласене çирĕплетме, опыта ӳстерме май парать. Ветерансем хăйсене 60 çул каялли пекех çамрăк туйрĕç.

Геннадий ИВАНОВ, техникумран 1965 çулта вĕренсе тухнă, Чăваш Республикин АПК ветеранĕсен Союзĕн членĕ
Пăртас

Пурнăç управĕшĕн

«Хастар тата вăрăм ĕмĕр» наци проекчĕпе килĕшӳллĕн Чăваш енре май уйăхĕнчен санитарлă авиаци служби хăйĕн ĕçне тытăнчĕ.

Кăçал пĕтĕмпе 70 енне вĕçев ирттерме палăртнă. Нумаях пулмасть санавиаци Вăрнар округĕнчи пĕр аслăрах ӳсĕмри арçыннăн пурнăçне çăлса хăварма май панă.

Санавиацине çыхăннă тăкаксен пĕр пайне «Хастар тата вăрăм ĕмĕр» наци проекчĕпе федераллă бюджетран, ыттине Олег Николаев республика Пуçлăхĕ хушнипе республика бюджетĕнчен саплаштараççĕ. Санавиаци республикăра 2020 çултан ĕçлет. Çак вăхăтра вăл 400 енне «йывăр» пациента вăхăтра медицина пулăшăвĕ кӳме май панă.

Сиплев илнисенчен чылайăшĕ – аслă ӳсĕмри çынсем. Çынсен сывлăхĕшĕн тăрăшни – пархатарлă ĕç. Аслă ӳсĕмрисем хăйсен ĕмĕрĕнче тăван ен, çĕршыв ырлăхĕшĕн чылай вăй хурса ĕçленĕ. Медицина пулăшнипе, хăйсем хастар пулнипе йывăр чирленĕ хыççăн та ура çине тăраççĕ. Кил хуçалăхне тĕреклетессипе малалла ĕçлеççĕ, мăнуксене çитĕнтерме пулăшаççĕ.

Оксана СЕМЕНОВА